**Хастар чун чӗреллӗ халӑх сӑвӑҫи.**

1957 ҫулта пӗтӗм чӑваш халӑхӗ Петр Петрович Хусанкай сӑвӑҫ 50 ҫул тултарнине анлӑн паллӑ турӗ.

Мӗн ачаран тенӗ пекех Хусанкай Петӗрӗ сӑвӑҫ пулма хӗмленнӗ. Вунҫичӗ ҫул тулнӑ-тулманах вӑл сӑвӑсем ҫырма пикенет, пыра-киле чӑн та ӑста сӑвӑҫ пулса ҫитӗнет.

Чӑваш халӑхӗ хӑйӗн чӑн сӑвӑҫисене мӗн авалтанпах чунтан-вартан юратнӑ. Ахаль мар ӗнтӗ ӗлӗкхи чӗлхере чӑвашсем сӑвӑҫсене ӑса вӗрентекенсемпе пӗр тана хурса хисепленӗ. Вӗсем пурнӑҫра йӗркелӗх тытас ӗҫре яланах кирлӗ ҫынсем пулнӑ, мӗншӗн тесен халӑх хушшинче ырри кӑна мар, усалли те, хаваслинчен ытла хурлӑхли те пулнӑ. Халӑх асаплӑ ӗҫ-хӗл хушшинче юрланӑ та, ташланӑ та - аптраман.

Мӗн авалтан ҫырулӑх ӗҫӗ пырас пулсан, чӑвашсем хушшинче юрӑ-сӑвӑ пин кӗнекене те шӑнӑҫаймӗччӗ. Аса илӗр-ха акӑ: пӗр Гаврил Федорович Федоровӑн ӑспуҫӗнче кӑна 750 яхӑн юрӑ-сӑвӑ упранса юлнӑ. Ун пек юрӑ ӑстисем - сӑвӑҫсем - пирӗн халӑхра ӗлӗкренех пулнӑ.

Чӑваш халӑхӗ юрра-сӑвва ялан юратнӑ. Ахаль мар ӗнтӗ иртнӗ ӗмӗрти шухӑшлавҫӑсем те халӑхпа сӑвӑлла калаҫнӑ.

Чӑрӑш тӑрринче куккук авӑтать,
Ырашлӑхра путене автать,
Ҫӗмӗрт тӑрринче шӑпчӑк автать,
Пирӗн автас килмест-им? -

тенӗ ӗлӗк-авал Чӑваш Хвети сӑвӑҫ.

Чӑваш халӑх пурнӑҫӗ ҫинчен шухӑша кайса, сӑвӑҫ ҫапла ҫырнӑ:

Мӗн тӑвас - пирӗн телей!
Пирӗн пулать выльӑхсем:

Ут, сысна, чăхă, хуртсем,
Сурăх, хур - лайăх, маттур -
Кăвакал, сĕт, çăмарта;
Çи, чăваш, хура çăкăр,
Сутса яр выльăх кунта,
Нумай пулĕ сан укçа -
Тиексене хуйхă чухне.
Çи, чăваш, хура çăкăр.
Мĕн тăвас - пирĕн телей!

Кусем ăнсăртран тенĕ пек сыхланса юлнă сăвăсем кăна. И. Я. Яковлев халăха çырăва вĕрентиччен чăваш литератури хунаса каясса шанма пулман. И. Я. Яковлев тăрăшнипе XX ĕмĕр пуçланнă çĕре тин чăвашсен интеллигенцийĕ хунав илнĕ.

1905 - 907 çулсенче революци çĕкленнипе чăвашсен пирвайхи хаçачĕ тухма пуçлать те, янкăр революциллĕ чăваш поэзийе тапранать. Кăварлă чун-чĕрепе ĕçленĕ çамрăк писательсем халăх революцийĕ енне тăраççĕ. Тайăр Тимкки, Демидов-Юлташ, Ф. Сергеев, Полоруссов-Шелепи т. ыт. те ĕçхалăхне, сăвăлла сăмахсемпе хавхалантарса, революцие вирлĕн хутшăнма чĕнеççĕ.

Хура реакци революцие пусарсанах, тискер патша тӳре-шари чăвашсен хаçатне те хупса хурать е хупмасăрах сăнчăрлаççĕ.

Анчах чăваш халăхне, унăн юрри-сăввине сăнчăрпа та, иимпе те пĕтерсе хума пултарайман.

Столыпинăн мăйкăçлă саманинче те И. Я. Яковлев шкулĕ тавра чăваш халăх юрри-сăввин çĕнĕ вăйлă хунавĕ палăрнă. Вăрттăнлăрах пулин те, К. В. Иванов, Н. В. Васильев тата ыттисен сăввисем пĕтĕм таврара янрама пуçланă. К. В. Ивановăн «Нарспийĕ», Н. В. Васильевăн «Янтрак янтравĕ» пек чĕре çуне шăратса çырнă сăвăсем чăваш халăх ĕмĕтне çирĕплетнĕ, хавхалантарнă.

Октябрьти Аслă революци çĕнĕ самана уçса пачĕ. Халăхпа пĕрле юрă-сăвă та чăн ирĕке тухрĕ.

Çеçпĕл Мишши совет саманинчи чăваш поэзийĕ валли гранитла никĕс хывса, сӳнми хĕлхем парса хăварнă. Чăвашсен çĕнĕрен çĕнĕ талантлă сăвăçсем аталанса, çитĕнсе пынă.

Пирĕн П. Хусанкай çав ушкăнри сăвăç, социализм тунă чухнехи тата коммунизмла пуласлăхшăн пыракан аслă кĕрешӳ вут-çулăмĕнче пиçĕхнĕ поэт вăл.

Кашни сăвăçăн хăйне кура сукмакĕ пур. Хусанкай пултарулăхĕ çинчен те çавнах калас пулать, унăн поэзийĕ хăйне евĕрлĕ.

Паллах, вăл çырнă произведенисене пĕчĕк статьяра ятран кăна асăнма та май çук, мĕншĕн тесен Петр Петрович çырнисем темиçе çĕре те çитеççĕ. Вăл 33 çул хушши тухăçлă ĕçленĕ.

Çавăнпа эпир халĕ Хусанкай пултарулăхĕн хăшпĕр енĕсене кăна асăрхаттарасшăн.

Хусанкай поэзийĕ питĕ анлă. Мĕн тĕрлĕ кăна сăвă çырман пулĕ вăл. Унăн сад пахчинче мĕнле кăна йывăç, мĕнле кăна çимĕç ӳсмест пулĕ. Анчах пурне те вĕсене пĕр камăл, пĕр ĕмĕт пĕтĕçтерсе тăрать. Вăл - халăх кăмăлĕ, халăх ĕмĕчĕ. «Чĕре юрри» тесе ят панă вăл хăй сăввисен пĕр кĕнекине. Унта Тăван çĕршыв - Совет çĕршывĕ аслăлăхне çутатса пани те, ăсталăх ячĕпе шăрантарнă пĕринчен тепри вирлĕ сăвăсем те, чăваш халăхĕн телейĕ ӳссе пыни çинчен çырнă чун хăпартмăш сăвăсем те пур.

Çавнашкал пысăк ыйтусем çинчен чĕре туйăмĕ вĕççĕн кăна калаçма та май çук теме пулать. Чĕререн ытларах ăсхакăл кирлĕ пек. Анчах чăваш халăхĕ нихçан та чĕрепе ăспуçа хирĕçтермен, яланах иккĕшне пĕр кăмăллă, çыпăçуллă тыткалама тăрăшнă. Чăвашсем ахаль мар ĕнтĕ. «Кăкăрĕ айĕнче çирĕп шухăш пур!», «Шухăшĕсем чĕре çумĕнче,

сăмахĕсем чĕлхе вĕçĕнче», –тесе юрлаççĕ. Эппин, чĕре юрри тенĕскер, чунтан-вартан халăха юратса, ăспуçпа шухăшласа çырнине пĕлтерет.

Петĕр Хусанкай - хăй пурнăçĕнче мĕн çамрăкранпах тĕнче курса çӳренĕ çын. Совет халăхĕсемпе те, чикĕ тулашĕнчи халăхсемпе те вăл куçа-куçăн паллашнă. Таçта çитсен те, вăл халăхран пĕр шит те уйрăлмарĕ. Тĕнчене сăнани, вĕренни ăна халăх ĕмĕчĕсемпе тата çывăхрах, тата тачăрах пулса ĕçлеме пиçĕхтернĕ. Çав хушăрах вăл, чăваш хăлăхĕ нихăш халăхпа та тăшманла пулманнине, вĕсенчен ютшăнмашкăн халĕ нимле сăлтав çуккине аса илсе, халăхсен туслăхне, хӳхĕм ялав пек, алран вĕçерми йăтса пырать.

Кам пулсан та - сухаçă, шахтер е салтак,
Украинец, чăваш, армянин-и -
Манăн чыс та, мухтав та малтан
вăл ак çак:
Эп - Советлă Союз гражданинĕ!

Кирек хăш халăх та ытти халăхсемпе туслă, татуллă пурăннă майăн кăна хăват хушса, çĕкленсе, чаплăланса, сăвапланса пырать. Çав чăнлăха Хусанкай яланах асра тытнă. Çавна пула вăл хăй чăвашсем хушшинче кăна мар, чылай катара та паллакан сăвăç пулса тăнă.

П. Хусанкай - шухăш-кăмăлĕпе кăна мар, хăй çырнă сăввисен сюжечĕпе те интернационалистла поэт.

Тĕлĕнмелле пек те, çав хушăрах П. Хусанкай кирек-мĕн çинчен çырнă чух та чăваш халăхне астумасăр çырман. Вăл çырнисенче - чăваш иккенне палăртмалăх пули-пулми теттесемсĕрех - вĕсене чăваш сăвăçи çырни уççăн палăрса тăрать.

Нумаях та пулмасть П. Хусанкайăн пĕр поэми - «Ленин в Горках» - вырăсла пичетленсе тухнăччĕ. Вăл кĕнекене Совет Союзĕн тулашĕнче

те юратса вулаççĕ иккен. Акă пĕр çьн Варшавăран Мускава («Советский писатель» издательствăна) мĕнле çыру янă:

«Разрешите передать при Вашей помощи чувашскому поэту П. Хусангаю мою глубокую благодарность за замечательную поэму «Ленин в Горках». Благодарю также и вас, как издателей, за издание такой яркой и талантливой вещи. Эти последние десять лет мне не приходилось встречать какие-либо значительные художественные произведепия о В. И. Ленине, образ которого всегда служит путеводной звездой для трудящихся всего мира», - тесе çырнă А. Уссаж ятлăскер.

Çак факт пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эппин, пирĕн сăвăçсем пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхне кăмăла каймалла, вирлĕ япаласем çырма пултараççĕ.

П. Хусанкай пултарулăхĕнче уйрăмах тата акă мĕн палăрса тăрать: вăл пĕр самантлăх кăмăлпа кăна çырмасть. Вăл иртни çине таянса, паянхине астуса, ырана та асăрхаса çырма тăрăшать. Вăл çырнисем нумайăшĕ тарăн шухăшлă, ăс-хакăла яланах вырнаçмалла, пысăк ĕмĕтлĕ. Унăн вулакан ăнланмалла мар тăлпасласа çырни çук. Вăл философилле темăсене тапратсан та, чăвашла сăмах çаврăнăшĕ тупса, типтерлĕ, çыпăçуллă, тăна кĕмелле, чĕ-рене хавхалантармалла шăратса çырать. Унăн вĕçкĕнленсе çырни çук. Вăл хăйне хăй яланах халăхпа пĕрле туять. Çакă - пысăк пахалăх.

Ахальтен мар ĕнтĕ, чăн тивĕçлĕрен, ăна чăваш халăхĕ хăйĕн депутатне суйланă.

Унăн алпырăвĕ халĕ сăвăласа çырас ĕçре пур çĕрте те пултарать. Хăйне кура вăл ялан çине тăрса вĕрентет. Унăн çави çумĕнче яланах лапатка.

Тепри пур - нумай пĕлет-и, сахал-и, - хăйне хăй тахçанах вĕренсе çитнĕ çын пек шутласа, ыттисене вĕрентме кăна пăхса тăрать. Хусанкайăн пĕр паллийĕ - вăл вĕрентет çеç мар, хăй те яланах халăхран, кĕнекерен вĕренсе пырать.

Çакă та чăн: чăваш чĕлхине ун пек тулли пĕлекенни пирĕн хушăра халĕ сайра-ха. Чăваш чĕлхине лайăх пĕлнипе кăна вăл çав тери ăнланмалла çырма пултарнă.

Хусанкай пурнăçĕнче хӳтĕ хушлăха кĕрсе ларса ĕçлесси-çырасси пулман. Магнитту стройки чухне вăл Магниттура пулнă, колхозсем тума пикеннĕ чух вăл ялсенче çӳренĕ, Тăван çĕршывшăн çапăçнă чух вăл фронтра пулнă - унтан урине амантса таврăннă. Идеологиллĕ вăрçăра та вăл, ай, тем пулĕ-кайĕ тесе пытанса çӳремен. Ун ăс-хакăлне, чун-чĕрине хумхатман ĕç пулман теме юрать.

Хăшпĕр юлташсем П. Хусанкайăн çамрăклăхра йăнăш пулнине илеççĕ те, вăл малтан националист пулнă тенĕ пекех сӳпĕлтетеççĕ. Анчах унашкал калаçни пĕрре те тĕрĕс мар.

Хусанкай националист пулман та, пулма та пултарайман. Мĕншĕн тесен мĕн ачаран тенĕ пек унăн ăспуçĕнче, чĕре хӳтлĕхĕнче коммунизм идейисем, интернационализм идейисем, Ленин вĕрентнисем пулнă.

Çынна хăй йăнăшне епле тӳрлетме пултарнине кура хисеплес пулать, мĕншĕн тесен, Ленин калашле, пĕр йăнăшми çын çук, пулма та пултараймасть.

П. П. Хусанкай вăл тĕлĕшрен ӳпкеве тивĕç çын мар. Парти организацийĕ ун йăнăшне асăрхаттарнă хыççăн, вăл часах хăй йăнăшне хăй тӳрлетрĕ. Çавăн хыççăн вăл, Коммунистсен партийĕн ретне кĕрсе, унăн хастарлă членĕ пулса ĕçлесе пырать.

Сăслă юманран çуна тупанĕ аваймăн, тенĕ ваттисем. Хусанкайăн сăсĕ пулман, çавăнпа вăл халăха кирлĕ пек аталанса, çитĕнсе пычĕ.

Пирĕн писательсенчен кашниех хăйсен йăнăшĕсене çавăн пек хăйсемех тишкерсе тӳрлетме пĕлес пулсан, мухтамалла кăна пулĕччĕ.

Эппин, П. Хусанкай мĕн çамрăкранпах совет сăвăçи, пĕтĕм чунĕ-варĕпе халăха парăннă, хастар та пултаруллă сăвăç пулни чăн-чăн факт, кисренми факт.

Çавă ĕнтĕ ăна Федоровăн, Тайăрăн, К. Ивановăн, Çеçпĕлĕн еткерĕсене пĕтĕçтерсе, А. Пушкин, М. Горький, В. Маяковский пултарулăхĕсенчен те хăват илсе, чăваш халăх поэзине çĕнĕ пусăма хăпартмашкăн вăй-хал панă.

Хăшпĕр хĕсĕк шухăшлă çынсем чăваш халăх поэзийĕ К. В. Ивановран пуçланнă та унтан мала халĕ те каяйман-ха тесе сăмахлаççĕ. Анчах вăл ним чухлĕ те тĕрĕс мар.

Чăваш халăхĕн илемлĕ литератури И. Я. Яковлев шкулĕпе пуçланнă. Унтан вара чăваш сăвăçисем халăха кирлĕ поэзие сыпăкран сыпăка аталантарса. хăпартса пынă. К. В. Иванов - чăваш поэзийĕн паллă классикĕ. Анчах вăл малтанхи хыпарçăсен пултарулăхĕ çине таянса ĕçленĕ. Вăл хăй çырма тытăниччен мĕн пулнипе, чăвашсеннипе, вырăссеннипе те усă курса, реакци вăхăтĕнче чăваш поэзине алла усма, пуçа сĕнкме паман, малалла илсе пынă. К. Ивановăн нихăçан шупкаланми паттăрлăхĕ çавă пулнă. Унпа юнашар ун чухне Шупуççынни ĕçленĕ. Шелепи те ĕçе пăрахман.

Социализмлă Аслă революци хыççăн çĕнĕ сăвăçсем хунанă. Çеçпĕл, унпа юнашар Н. Шупуççынни, Н. Шелепи, Н. Ваçанкка, Г. Алендей, С. Элкер тата ыт. те ĕçленĕ.

Социализм çĕнтерсе çитнĕ тапхăрта, коммунизма куçасшăн кĕрешме тытăннă вăхăтра, П. П. Хусанкай пуринчен те ирттererех пычĕ. Унпа юнашар сăвăçсем чылай йышланса кайрĕç: Ухсай, Митта, Уйăп Мишши, Алга, Шавли т. ыт. те.

Кунта кам вĕрентнĕ тесе сăмах ваклани вырăнлă мар.

Анчах пĕр çакă паллă: вĕсем пурте, иртнĕ тапхăрсенчи чăваш сăвăçисен еткерĕ çине таянса, вырăс тата ытти поэтсен вĕрентӳлĕхне чухласа, ӳссе пынă.

П. Хусанкай тапхăрĕ çĕнĕ тапхăр пулнă, ун пултарулăхĕ те киввинче юлма пултарайман. Хусанкай та, унпа пĕр ретре ĕçлекен сăвăçсем те

самана уттипе утнӑ. Ҫавна пула вӗсен пултарулӑхӗ ҫӳллӗрех те, вӑйлӑрах та пулса пынӑ.

Ҫавӑ кашни ҫын умӗнчи куҫкӗрет факт.

Хӑй саманинчен кая юлса, хыҫалта сӗтӗрӗнсе пыракан писатель нумайлӑха мар. Хӑй саманипе алла-аллӑн е кӑшт маларах та пӑхса пыракан писатель - ку хӑватлӑ, ку чӑн та пысӑк хисепе тивӗҫ ҫын.

Чӑваш историйӗнче те юлхав писательсем пулкаланӑ; вӗсене халӗ халӑх писатель тесе те шутламасть.

Паянпа ыран халӑха мӗн кирлине асӑрхаса пыман пирки е ӗлкӗрсе пыrайман пирки те писатель ҫырни ҫине каю шӑтать; вӑл халӑх хушшине ҫитиччченех кивелет, халӑх кӑмӑлне кайми, килӗшми, юрами пулать.

Хусанкайӑн юлхавӗ ҫук, вӑл ялан кӗрешӳ ҫарӗн малти ретӗнче.

Хусанкайӑн иртӗнӗвӗ те ҫук. Вӑл хӑйне хӑй нихҫан та асла хурса каппайман, вӑл хӑйӗн кӑвапине халӑхран уйӑрман. Вӑл ҫак кунсенче Мускавра вӗренет пулин те, тем чул ҫамрӑк писательсемпе ҫыхӑнуллӑ, халӑх ӗҫӗпе ҫыхӑнуллӑ.

Хусанкай пек ҫине тӑрса ҫамрӑк сӑвӑҫсене аталантарасшӑн кирек хӑҫан та, кирек ӑҫта та вӑхӑт тупса, чӑн кӑмӑлтан, пӗр вӗчӗхсӗр ӗҫлекен писательсем пирӗн сайра пулнӑ, халӗ те ытлашши нумаях мар. Тӗслӗхе Хусанкайпа А. Канаш туслӑхне кӑна асӑнсан та ҫителӗклӗ. Хусанкай патне кашни кун темиҫе ҫыру килмесӗр иртмест. Вӑл ҫав ҫырусене хурав пама вӑхӑт та, хапӑл та тупса пырать.

Писательсем хушшинче юлташлӑх, пӗр ӗмӗтлӗ ӑмӑртса, алла-алӑн тытӑнса, ҫине тӑрса ӗҫлени, пӗрне-пӗри йӑнӑшасран е сӗлкӗшесрен сыхлани питӗ паха. Ку тӗлӗшрен те П. Хусанкай чӑн халӑх поэчӗ пулса тӑрать.

Вал ӑҫтиҫук, пули-пулми, принципсӑр харкашӑва нихҫан та юратман, май пур чух ыттисене те ҫавнашкал касуран хӳтӗленӗ. Паллах, ҫавӑ

чăваш писателĕсен пĕрлĕхне, партилле принципла пĕрлĕхне çирĕплетме пулăшмасăр пултарайман.

Пирĕн халăх, Коммунистсен партийĕн решенийĕсене пурнăça кĕртсе, пурнăça лайăхлатнăçемĕн лайăхлатса пыма тăрăшса ĕçлет.

Çав ĕçре халăхпа пĕрле йĕркеллĕ те тирпейлĕ, тухăçлă, ăнăçлă ĕçлесе пырас тесен, пирĕн писательсен пурнăça тĕплĕн тишкерсе вĕренес пулать.

Çак сăмахсене эпир пĕрех те уяв ячĕпе тесе каламастпăр. Вăл - чăн сăмах.

П. П. Хусанкай хăйĕн ĕçĕсем çинчен хăй пĕр тĕлте, кĕскен кăна пулин те, тулли тĕшлĕ çапла каланăччĕ:

Эп сăмах хăватне ĕненетĕп,
Эп пĕлеп: сăмахпа этеме
Амантма та пулать, ӳкерме те,
Ӳкнине те пулать çĕклеме...
Парти - хурçă колоннăсен çарĕ.
Ун çулне, тĕллевне пĕлсен тин
Умри ĕмĕт çитсе ялтăрарĕ
Сарлакан, пархатарлăн, туллин.
Парти! Ун умĕнче чун яр-уçă:
Вăл тĕпчет, вăл пĕлет, çул сĕнет...
Ман умра - пĕтĕм çĕрĕн телейĕ:
Ĕçпеле пиçĕхсе ӳснĕ чун -
Партипе пултарап хĕвеле эп
Çĕр çине антарма кирлĕ чух.
Акапуçĕ тытса хăпаланнă
Аллăма пĕтĕм халăх çинче
Парти хĕç пек перо шанса панă,

Эп пăрахмăп ăна виличчен...

(«Чĕре юрри», 71-77 стр.)

Çакă ĕнтĕ Хусанканăн чĕре варри, чун хавалĕ. Çак сăмахсен чăнлăхне халăх ун ĕçĕнче курса тăрать. Çавăнпа та ĕнтĕ çак уявлă кунсенче, П. П. Хусанкая чунтан юратса, рабочисем те. колхозниксем те - пур ĕççынни савса мухтать, нумай кунçул сунса, халăхшăн тата нумайрах ырлăх тăвасса ĕмĕтленет.